Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

48 (7365) № * Юн кун, 2006 çулхи июнĕн (çĕртме) 7-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ыран – Социаллă сферăра ĕçлекенсен кунĕ



*Эсир сăн ӳкерчĕкре районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ĕçченĕсене Ольга Николаевна Яковлева ертсе пыракан специалиста тата Светлана Леонидовна Скворцова тĕп специалиста куратăр. Шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçлаççĕ вĕсем, хăйсем патне пыракансен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшаççĕ.*

В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

**СОЦИАЛЛĂ СФЕРĂН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

**Сире професси уявĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатăп. Сирĕн ĕç яваплă та пархатарлă: инвалидсемпе ветерансемшĕн, нумай ачаллă çемьесемпе пулăшусăр юлнисемшĕн шанчăкпа тĕрек пулса тăратăр. Вĕсене пулăшас тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Хăвăр ĕçĕр халăхшăн пулнине пĕр самантлăха та манмастăр. Тавах сире çакăншăн.**

**Куллен вуншар ыйту татса панă май эсир кашни çыннăн чун-чĕри патне уйрăм çул-йĕр тупатăр. Мĕн чухлĕ чăтăмлăх, чун ăшши, ăшпиллĕхпе ăнланулăх кирлĕ. Малашне те пĕрре те ан иксĕлччĕр çак ырă енсем сирĕнте.**

**Сире пурне те çирĕп сывлăх, çăмăл мар ĕçĕрте иксĕлми вăйхал, вĕçĕ-хĕррисĕр ырă кăмăл, телей, вăрăм кун-çул сунатăп. Çемйĕрсенче юратупа килĕшу пултăр, ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр, шухăшлани пурнăçлантăр.**

**Район пуçлăхĕ**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

## Республикăра

## 18 пин гектар çĕре пусă çаврăнăшне тавăрнă

Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров виçĕм кун республика Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата Федераци ведомствисен территорири органĕсен хăш-пĕр ертӳçисемпе йăлана кĕнĕ тунти кунхи планерка ирттернĕ.

Кăçал Федераци бюджечĕн планран ирттернĕ тупăшĕсемпе усă курса уйăрнă укçа-тенкĕне чи малтанах юхан шыв порчĕпе Шупашкар аэропортĕнчи вĕçев çулне çĕнетнĕ çĕре ярĕç. Федераци бюджечĕн шучĕпе çавăн пекех федераци министерствисемпе тата агентствисемпе 2007 çулхи инвестици программине тунă чухне анлăн ĕçлеме тивет. Калаçса татăлнă килĕшӳсем пурнăçа кĕччĕр тесе отрасль министрĕсене Сергей Гапликов çак ĕçсене вăйлатма хушнă.

Вице-премьер – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев кăçалхи çурхи уй-хир ĕçĕсен малашнехи пĕтĕмлетĕвĕсемпе паллаштарнă. Вăл çакна палăртнă: тĕпрен илсен, кăçалхи калчасем пĕлтĕрхинчен лайăхрах, çумăр çунине пула вĕсем лайăх шăтса тухнă. Чăваш Енре 18 пин гектар çĕре çĕнĕрен пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. "Халĕ, – пĕлтернĕ Михаил Игнатьев, – çум курăксемпе анлăн кĕрешмелле".

Михаил Игнатьев çакна та пĕлтернĕ: çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Раççей Перекет банкĕ тинех ял çыннисене килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллатнă кредитсем пама пуçланă. "Россельхозбанк" ку ĕçе кăшт маларах пуçланă. Халĕ республикăра 1091 çемье кредит илме документсем тăратнă, 670 çемьен заявкисем банксенче выртаççĕ. Николай Федоров вице-премьера çăмăллатнă кредитсем парассине вăйлатма хушнă.

**ЧР ПА пресс-службинчен.**

## КАМĂН СĂВĂМ ПЫСĂКРАХ?

**Районти хуçалăхсенче кăçалхи июнĕн 5-мĕшĕнче кашни ĕнерен сĕт вăтамран мĕн чухлĕ суса илнине кăтартни (килогрампа)**

**1. Сĕт сунă. 2. Иртнĕ çул çав вăхăтра сунă.**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 11,0 | 9,5 |
| «Волга» | 11,2 | 13,6 |
| «Восток» | 13,1 | 13,5 |
| «Герой» | 16,3 | 14,5 |
| К. Иванов яч. хис. | 8,3 | 6,7 |
| Ильич яч. хис. | 15,1 | 15,1 |
| Ленин яч. хис | 15,3 | 15,0 |
| «Лидер» | 13,6 | 18,4 |
| «Дружба» | 15,3 | 10,0 |
| «Оринино» | 12,2 | 11,5 |
| «Передовик» | 12,4 | 9,9 |
| «Свобода» | 14,6 | 16,4 |
| «Сеятель» | 5,5 | 9,0 |
| Суворов яч. хис. | 11,3 | 8,9 |
| «Рассвет» | 13,3 | 11,7 |
| «Ударник» | 14,4 | 17,6 |
| «Хлебороб» | 13,1 | 5,7 |
| Чапаев яч. хис. | 10,6 | 10,7 |
| «Чемеево» | 10,9 | 9,6 |
| Чкалов яч. хис. | 10,6 | 11,7 |
| Михайлован КФХ | 14,6 | 7,6 |
| Отенован КФХ | 8,3 | 0 |
| **Районĕпе** | **12,9** | **12,4** |

## Наци проекчĕ

## Сăмах кредитсем пиркиех

"АПК аталантарасси" наци проекчĕ ял хуçалăхне ура çине тăратассинче пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине кашниех ăнланса илчĕ ĕнтĕ. Патшалăх çапла майпа уйрăм хушма хуçалăха аталантармалли çула та уçса пачĕ. Паянхи кун тĕлне пирĕн районтан 30 çын патшалăх пулăшăвне илнĕ ĕнтĕ. Пĕтĕмпе 6 млн. та 15 пин тенкĕлĕх. Çав шутран 29-шĕ кредита "Россельхозбанк" урлă илнĕ 5 млн. та 215 пин тенкĕлĕх. Асилтеретĕп. "Россельхозбанк" представительстви районти ял хуçалăх управленийĕн пӳлĕмĕнче вырнаçнă. Асăннă банк урлă кредит илес текенсен документсене унта илсе пымалла. "Килĕшӳ" кооператив урлă 1 çын 300 пин тенкĕлĕх кредит илнĕ.

Çакна палăртмалла. Çак кунсенче Перекет банкĕ те асăннă наци проектне пурнăçа кĕртессипе ĕçлеме пуçларĕ. Перекет банкĕн Муркашри уйрăмĕ урлă уйрăм хушма хуçалăха аталантарма патшалăх пулăшăвне илес текенсем паянхи куна 75ĕн: пурĕ 7 миллион та 146 пин тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвне илме документсем хатĕрлесе панă вĕсем.

"Россельхозбанк" урлă кредит илес текенсем тата 29ăн: пĕтĕмпе 4 миллион та 575 пин тенкĕлĕх пулăшу илес ĕмĕтлĕ вĕсем.

"Килĕшӳ" кредит кооперативĕ урлă патшалăх пулăшăвне тата тепĕр 5 çын пурĕ 1 миллион та 300 пин тенкĕлĕх илесшĕн.

Çапла майпа çак 2 банкпа кредит кооперативĕ урлă пирĕн районта пурăнакан тепĕр 109 çын 13 миллион та 21 пин тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвне илĕç.

Хаçат вулакансем! Уйрăм хушма хуçалăха аталантарма патшалăх пулăшăвне илес тетĕр пулсан, эсир кая юлман-ха. Чи малтанах эсир ку ыйтупа хăвăр пурăнакан ял тăрăхĕн администрацине кайăр. Сире унта мĕнле документсем хатĕрлесси пирки ăнлантараççĕ, сире патшалăх пулăшăвне илме пулăшаççĕ.

"Россельхозбанк" урлă кредит илнĕ 29 çынна вара çакăн пирки асилтересшĕн. Кредита тĕллевлĕн усă курни çинчен çирĕплетекен документсене банка тăратăр: çак ĕçе мĕн чуль хăвăртрах пурнăçлатăр, сирĕн счет çине патшалăх саплаштаракан сумма çавăн чухлĕ маларах килсе тăма пуçлĕ.

Уйрăм хушма хуçалăхсене аталантарма кредит илессипе Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ лайăхрах ĕçлет: 7ĕн кредит илнĕ. Çавăн пекех Турай, Ярапайкасси ял тăрăхĕсенче те 6-шар çын патшалăх пулăшăвне илнĕ.

**Л. ПЕТРОВА.**

## Ĕçре палăрнăшăн

## Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн июнĕн 2-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

Нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçре хастар пулнăшăн:

**Зоя Семеновна ВОЛКОВАНА**, "Муркашри автомобильпе техника сервисĕ" ОАО штукатур-малярне;

**Маргарита Мефодьевна ЗАМЯТИНАНА,** "Муркашри автомобильпе техника сервисĕ" ОАО аппаратчицине;

**Валерий Васильевич ПОПОВА**, "Муркашри автомобильпе техника сервисĕ" ОАО слесарь-ремонтникне;

**Галина Петровна СИДОРОВАНА**, "Муркашри автомобильпе техника сервисĕ" ОАО экономистне.

Ял хуçалăх производствинче нумай çул ĕçленĕшĕн:

**Андриян Ионович АВРАМОВА**, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн 1-мĕш бригада ертӳçине;

**Лидия Алексеевна ПЕТРОВАНА,** "Ударник" ОПХ тĕп бухгалтерĕн çумне.

Кăçалхи ака-суха ĕçĕсенче тунă çитĕнӳсемшĕн:

**Поликарп Ефимович АЛЕКСАНДРОВА**, Михайлов КФХ трактористне.

## 10-мĕшсем валли

## Тӳрех вĕренме кĕме пулать

Акă, тепĕр вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ. 11-сем халĕ экзаменсем тытаççĕ. Ун хыççăн вара пулас профессие суйлас тĕллевпе тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕсене те вĕренме кĕмелли экзаменсем пуçланĕç.

9 класс пĕтерекенсен те колледжсенче малалла пĕлӳ илме майсем пур. Акă, кĕçнерни кун, июнĕн 8-мĕшĕнче, пирĕн района машиностроительнăй колледж преподавателĕсем килеççĕ. Вĕсем 9 класс хыççăн асăннă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕмелли условисемпе паллаштарĕç. Çавăн пекех кунта экзамен тыттараççĕ. Унăн результачĕпе тӳрех вĕренме илеççĕ. Апла пулсан, 9 класс пĕтернĕ яшсемпе хĕрсем, хăвăрăн пĕлĕвĕре вырăнтах тĕрĕслеме, тӳрех вĕренме кĕме пултарас шанчăкпа усă курăр. Çавăнпа та кĕçнерни кун район администрацийĕн çуртне районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методпӳлĕмне 9 сехете килĕр. Шăпах çакăн чухне пуçланать те çак тĕл пулу.

**Л. ПАВЛОВА.**

## Йыхрав

## Акатуйра пĕрле савăнар

Çурхи ака-суха ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн районта Акатуй ирттересси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Вырăнсенче халĕ ку уявсем малалла пыраççĕ. Çитес шăмат кун вара пурте район Акатуйне Лантăш вăрманĕн уçланкине пуçтарăнăпăр. Уяв 10 сехет те 50 минутра пĕрлештернĕ хор пултарулăхĕпе, "Çĕрĕм-шывăм, чечеклен" музыкăпа хореографи композицийĕпе уçăлать. Унтан уява пуçтарăннисене район пуçлăхĕ Ю. Иванов, унăн пĕрремĕш çумĕ А. Иванов çурхи ĕçсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн производствăра малта пыракансене министерствăн, район администрацийĕн Хисеп грамотисемпе чыслĕç. Уява пуçтарăннисене РФ Президент администрацийĕн, министерствăсен представителĕсем, ытти хăнасем саламлĕç.

Палăртмалла, кăçал Акатуя "Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкне" халалласçĕ. Çавăнпа район аталанăвĕ, пуласлăхĕ, çемье пурнăçĕпе, ĕçпе тачă çыхăннине уйрăмах палăртаççĕ уявра. РФ Президенчĕ В.В. Путин Федераци Пухăвне янă çырура та çемье пĕлтерĕшне ӳстермелли майсене нумай палăртрĕ. Нумай ачаллă çемьесене, ĕç династийĕсене уявра чысласа ни шăпах вырăнлă пулĕ. Çакă çитĕнекен ăрăва çемьепе ĕç пĕлтерĕшне ăша хывса ӳсмеллине ас илтерĕ.

Уявра никам та тунсăхламĕ. Çӳлти сцена çинче "Ака-суха вĕçленсен, тăван, пĕрле савăнар!" ятпа художество пултарулăх коллективĕсен ушкăнĕн концерчĕ пулать. Çав хушăрах уçланкăра "Вăйăа тухăр пирĕнпе" кану программи пуçланать.

Эстрада юррисене кăмăллакансем вара уçланкăн аялти сцени умне пуçтарăнĕç. Унта "Алран алла тытăнар, савăк юрă янратар!" ятпа çамрăксем валли эстрада коллективĕсен концерчĕ пуçланĕ.

Спорта юратакансем те хăйсене кирлине тупĕç уявра. Спортăн 10 тĕсĕпе ăмăрту иртет кунта: волейболла вылĕç, боксла кĕрешĕç, кире пуканне йăтĕç, армспорт, саньда т. ыт. те.

Акатуйра эсир вырăна тухмасăрах хăш ял тăрăхĕ мĕнле пурăннипе те паллашăр. Кашни ял тăрăхĕ хăйсем çинчен калакан фотостенд тăратать уява, хăйсен тăрăхĕнчи ал ăстисен ĕçĕсене кăтартĕç. Пултаруллă çынсемпе кунтах тĕл пулса калаçма, эсир хăвăра кăсăклантаракан ыйту çине те хурав илме пултаратăр.

Акатуйра яланхи пекех Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕн магазинĕсемпе обществăлла апатлану точкисем ĕçлĕç, уйрăм предпринимательсем те тĕрлĕ таварсем сĕнĕç, ача-пăча вара яланхи пекех карусельпе ярăнса чунне уçĕ.

Уяв 15 сехетре спорт мероприятийĕсенче хастар пулнисене, художество пултарулăх коллективĕсенчен чи маттуррисене чысланипе вĕçленĕ.

Халĕ районта Акатуя хатĕрленес ĕçсем малалла пыраççĕ. Виçĕм кун район пуçлăхĕ çакăншăн яваплисемпе Лантăш уçланкинче канашлу ирттерчĕ. Унта уявччен туса çитермелли ĕçсене палăртрĕç.

**Л. ТУКТИНА.**

## Тӳрĕ лини

## Кирлĕ информацие илес тесен

«Россельхозбанк» уçă акционер обществи хăйĕн информаци центрĕнче «АПК аталантарасси» наци проектне информаци енĕпе тивĕçтерессин тата пурнăçа кĕртессин мониторингĕ енĕпе тӳрĕ телефон линине йĕркелет (call-центр). Кирек кам та 8-800-200-02-90 телефонпа шăнкăравласа наци проекчĕ шайĕнче кредитсем парасси, документсене йĕркелесси, кредитсем илнĕ чухнехи ыйтусем пирки пĕлтерме пултарать. Телефонпа шăнкăравласси тӳлевсĕр. Çакă наци проектне пурнăçа кĕртесси пирки тулли информаци илсе тăма, ку енĕпе лайăх енсемпе йывăрлăхсем пирки çийĕнчех пĕлсе тăма май парĕ.

Тӳрĕ лини ĕçне «Россельхозбанкăн» пур подразделенийĕсене те явăçтараççĕ. Чи малтанах вара кредит парассипе ĕçлекеннисене тата юридици ыйтăвĕсемпе тивĕçтерекенсене.

**Çырăнтару - 2006**

**Райхаçатăн çырăнтару хакĕ ку хутĕнче те ӳсмест**

**Хаклă вулакансем! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унччченхи хакпа - 135 тенкĕпе - çырăнтараççĕ.**

**Иккĕмĕш çур çулта та пĕрле пулар!**